# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

Муркаш район хаҫачӗ 1944 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнчепе тухать

42 (8609) № * Шӑматкун, ҫӗртме (июнь) уйӑхӗн 9-мӗшӗ * Хакӗ ирӗклӗ

Суту-илӳ

## Тавар туянаканпа тарават



Хастар ӗҫ валли пурнӑҫра ялан вырӑн пур. Халӑхшӑн тӑрӑшма кӑна пӗлмелле. Муркаш райповӗн хуҫалӑх тата строительство таварӗсен магазинӗнче вӑй хуракансем ял ҫыннине кулленхи пурнӑҫра кирлӗ тӗрлӗ таварпа вӑхӑтра тивӗҫтерессипе тӑрӑшаҫҫӗ. Ҫавна пӗлсех-тӗр тавар туянакансем те кунта ырӑ шанчӑкпа килеҫҫӗ, ыйтӑвӗсене тивӗҫтерсе киле таврӑнаҫҫӗ. Ҫакӑ мар-и-ха тавар туянаканӑн телейӗ? Ыйту хуравне магазинта ӗҫлекен кашни сутуҫӑ пӗлет. Ҫавӑнпа сутуҫӑсен таравтлӑхӗ кунта ялан тӗп вырӑнта.

Паянхи сӑн ӳкерчӗкре эсир асӑннӑ магазин ӗҫченӗсене Лилия Казаковӑна, Любовь Архиповӑна, Валентина Львовӑна, Венера Корольковӑна, Марина Сапожниковӑна (сулахайран сылтӑмалла) куратӑр. Уйӑхсерен пысӑк тавар ҫаврӑнӑш тӑвакансерсем тӑтӑшах шыравра. Ҫавӑнпах ӗнтӗ туслӑ коллектив ҫулла тавар уйрӑмах нумай сутать. Хӗлле те кӑтарту пӗчӗк мар. Ҫакӑ хастар сутуҫӑсен ӗҫ калӑпӑшӗ пысӑккине ҫирӗплетет.

А. БЕЛОВ сӑн ӳкерчӗкӗ.

Салам

**ХИСЕПЛӖ ЕНТЕШӖМӖРСЕМ!**

Сире Раҫҫей кунӗ ячӗпе саламлатӑп!

Ку уяв нумай нациллӗ аслӑ Раҫҫей ҫыннисене пӗрлештерет. Вӑл пире ҫӗршывӑн хальхи пурнӑҫӗшӗн тата пуласлӑхӗшӗн яваплӑ пулмаллине аса илтерет. Раҫҫей халӑхӗ капашсӑр пысӑк ӗҫсем туни ҫӗршыва вӑйлатать. Эпир Раҫҫейпе мӑнаҫланатпӑр, вӑл аталантӑр, чечеклентӗр тесе мӗнпур вӑя паратпӑр, ҫитӗнӳсене нумайлататпӑр.

Раҫҫей Федерацийӗн Президенчӗ Владимир Владимирович Путин Раҫҫейшӗн, унӑн тивӗҫлӗ пуласлӑхӗшӗн тата граждансен тӑнӑҫлӑхӗшӗн пирӗн палӑртнӑ тӗллевсем патне ҫирӗппӗн пӗрле утмалла тени уйрӑмах хаклӑ. Эпир Тӑван ҫӗршыва юратни, тӑрӑшса ӗҫлени ырлӑх кӳтӗр, ҫӗршыва аталантарма тата ҫирӗплетме пулӑштӑр!

Чӑваш Енре пурӑнакансене ҫирӗп сывлӑх, ӑнӑҫу тата ҫӗршыв ырлӑхӗшӗн, ыранхи куншӑн ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тума сунатӑп.

**Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗ**
**М. ИГНАТЬЕВ.**

Районта

## «ТУС» ӗҫе тытӑнчӗ

«ТУС» акционер пӗрлешӗвӗ «Мӑн Сӗнтӗр – Мӑн Хураҫка – Ишмула» автоҫула юсассипе ӗҫлеме пуҫларӗ. Ку ҫула «Хӑрушлӑхсӑр тата пахалӑхлӑ ҫул-йӗр» федераци программипе килӗшӳллӗн юсаҫҫӗ.

Район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Р. Тимофеев тата капиталлӑ строительствӑпа общество инфраструктурине аталантарассин пай пуҫлӑхӗ А. Матросов ҫул-йӗр ӗҫченӗсемпе тӗл пулнӑ. Ҫул ял урамӗсемпе те иртет. Ҫавна май ертӳҫӗсем ҫулӑн пахалӑхӗпе пӗрлех урамсенче шыв юхмалли вырӑнсене те пысӑк тимлӗх уйӑрма сӗннӗ.

Подряд организацийӗн 6,9 км ҫула юсамалла. Хальхи вӑхӑтра кунта вак чул сарассипе тимлеҫҫӗ.

## Хӗр ачасем ытларах

Район администрацийӗн ЗАГС пайӗнче хыҫа юлнӑ пилӗк уйӑха пӗтӗмлетнӗ.

Ҫак вӑхӑтра районта 116 ача ҫуралнине регистрациленӗ: 53 арҫын ача тата 63 хӗр ача. Ачасем ытларах Муркаш (15), Ҫатракасси (13), Мӑн Сӗнтӗр (13) тата Оринин (11) ял тӑрӑхӗсенчи ҫемьесенче ҫуралнӑ.

Районти 215 ҫын пурнӑҫран уйрӑлнӑ: 103 арҫын тата 112 хӗрарӑм. Вилнӗ арҫынсен вӑтам ҫул ҫӳсӗмӗ 63 ҫулпа танлашнӑ пулсан, хӗрарӑмсен – 79 ҫулпа.

Пилӗк уйӑхра районта 30 ҫӗнӗ ҫемье йӗркеленнӗ, анчах 24 мӑшӑр уйрӑлнӑ.

Н. НИКОЛАЕВА хатӗрленӗ.

Кӗскен

## Пухусем иртеҫҫӗ

Мӑн Сӗнтӗр ял тӑрӑхӗнчи Мӑн Тутаркас тата Вомпӑкасси ялӗсенче июнӗн 6-мӗшӗнче ял тӑрӑхӗн пуҫлӑхӗ А. Лаптев ял ҫыннисемпе тӗл пулса калаҫнӑ.

Пухусенче ҫуллахи вӑхӑтра пушар хӑрушсӑрлӑхӗпе тивӗҫтересси, территорисене тирпей-илем кӗртесси, каяш турттарса тухасси, право йӗркине пӑхӑнасси пирки асӑрхаттарнӑ. Ҫавӑн пекех ҫуллахи вӑхӑтра шыв ҫинчи хӑрушсӑрлӑх ҫине те пысӑк тимлӗх уйӑрмаллине палӑртнӑ.

Ҫак ҫивӗч ыйтусене тата вырӑнти лару-тӑрупа ҫыхӑннӑ ыйтусене сӳтсе явассипе пухусем районти ытти ялта та иртеҫҫӗ.

## Ҫуткӳл тавра тирпейленӗ

Июнӗн 5-мӗшӗнче, Пӗтӗм тӗнчери тавралӑха хӳтӗлемелли тата Эколог кунӗнче, Турай ял тӑрӑхӗн администрацийӗн тата вырӑнти культура ӗҫченӗсем экологи субботникӗ ирттернӗ.

Ку хутӗнче турайсем Ҫуткӳл таврашне тирпей-илем кӗртнӗ. Ҫак кӳлӗ – карст мелӗпе пулса кайнӑ Чӑваш Енри чи тарӑн кӳлӗ. Унӑн тарӑнӑшне 14,8 метр тесе палӑртнӑ.

Ҫуткӳл ҫут ҫанталӑк палӑкӗ шутланса тӑрать. Ҫавӑнпа та субботника хутшӑннӑ ҫынсем кунта канма е пулӑ тытма килекенсем те хӑйсем хыҫҫӑн тирпейлӗ хӑварасса шанаҫҫӗ.

Тӳрӗ лини

## Аталану – тӗрӗс ҫул-йӗрпе

Июнӗн 7-мӗшӗнче Раҫҫей Федерацийӗн Президенчӗ Владимир Путин тӳрӗ эфирта ҫынсен ыйтӑвӗсене хуравларӗ. 12.00 сехетре пуҫланнӑ тӳрӗ лини тӑватӑ сехет ҫурра яхӑн тӑсӑлчӗ.

Кӑҫалхипе тӳрӗ лини вун улттӑмӗш пулчӗ. Владимир Путин социаллӑ пурнӑҫпа, экономикӑпа тата право ӗҫӗ-хӗлӗпе ҫыхӑннӑ чылай ыйтӑва хуравлама ӗлкӗрчӗ.

Президент ҫӗршыв пӗтӗмӗшле тӗрӗс ҫулйӗрпе аталаннине, экономика кӑтартӑвӗн ӳсӗмӗ ҫирӗп пулнине палӑртрӗ.

Ҫынсен пурнӑҫ ҫулӗн ӳсӗмӗ вӑрӑмланса пыни, граждансен тупӑшӗ ӳссе пыни те тӑнӑҫлӑ аталану паллисем пулнине пӗлтерчӗ.

Машинӑсемпе тӗрлӗ оборудовани, ял хуҫалӑх продукцине ют ҫӗршывсене сутассин калӑпӑшӗ те ӳсет.

Ҫӗршыв Правительствин тытӑмӗ пирки панӑ ыйтӑва хуравланӑ май, В. Путин Правительствӑн ҫӗнӗ тытӑмӗ оптималлӑ пулнине ӑнлантарса пачӗ. Правительствӑра ҫӗршыв аталанӑвӗн планне хатӗрленӗ ҫынсем те, пултаруллӑ ҫӗнӗ ҫынсем те пуррине палӑртрӗ.

Налукӑн прогрессивлӑ шайӗ пирки панӑ ыйтусем те пулчӗҫ. Нумайӑшӗ налук шайӗ ӗҫ укҫине кура пулмаллине калать. В. Путин каланӑ тӑрӑх вара, ку ҫӗнӳ практикӑра тупӑша пытарма пуҫланипе ҫавӑнса тухать. Ҫавна май инвестицисем хывасси те пӗтӗмӗшле чакасси куҫкӗрет.

Топливо хакӗ ӳсни пирки, паллах, ыйтмасӑр пулмарӗ. Ку ыйту юлашки вӑхӑтра чи ҫивӗччи тесен те йӑнӑш мар. Президент палӑртнӑ тӑрӑх, ӑна татса парассипе ҫитес вӑхӑтрах акцизсене ӳстерессине чармалла.

Нумай ачаллӑ ҫемьесемпе ҫыхӑннӑ ыйтӑва та тӳрӗ эфирта илтме пулчӗ. В. Путин вӗсене тивӗҫтерекен ҫӗр участокӗсем пурӑнмалли ҫурт-йӗр хӑпартма меллӗ пулмаллине палӑртрӗ.

«Инҫет Хӗвел тухӑҫри гектар» пирки, Владивостокран ытти хуласене вӗҫме авиабилет ытла та хаклӑ пулни пирки, бизнес капиталӗ пирки те ыйтусем пулчӗҫ. Ыйтусене хуравланӑ май, пысӑк бизнес укҫана Раҫҫейре ӗҫлесе илет пулсан, президент вӗсене капитала та ҫавӑнтах тытма сӗннине аса илтерчӗ.

Президент космос отраслне аталантарассин планӗсемпе те паллаштарчӗ. Спутниксен пахалӑхне ӳстерессипе тата вӗсене космоса вӗҫтерессипе тӗнчере лидер позицине тытса тӑрас тӗллевпе патшалӑх умӗнче пысӑк задачӑсем тӑнине каларӗ.

Ҫынсен пурнӑҫ тӑршшӗн ыйтӑвӗ патне таврӑннӑ май, президент ума лартнӑ тӗллевсене сывлӑх сиплевӗнче, вӑл шутра усал шыҫӑ чирӗсемпе кӗрешессинче, ҫӗнӗ меслетсемпе усӑ курмасӑр май ҫуккине палӑртрӗ. Усал шыҫӑ чирӗсене хирӗҫ кӗрешессипе патшалӑх программине хатӗрленине пӗлтерчӗ.

Пурӑнмалли ҫурт-йӗр строительствин кӑтартӑвӗсене ӳстересси, ипотека кредичӗн ставкине пӗчӗклетесси, криптовалюта, спорт объекчӗсем пирки те ыйтусем пулчӗҫ. Экологипе ҫыхӑннӑ ыйту та сахал мар панӑ президента.

Тӳрӗ лини вӑхӑтӗнче В. Путин социаллӑ сферӑри ӗҫ укҫи шайне тытса тӑрассипе кӑна мар, ӑна ӳстерессипе те тимлемеллине пӗлтерчӗ.

Ҫул-йӗр пахалӑхӗ пирки пуҫарнӑ калаҫура федераци пӗлтерӗшлӗ ҫулсен пахалӑхӗ йӗркеллӗ шайра, регионсенчи ҫулсене те ҫав шая ҫитермеллине каларӗ.

Ҫырӑнтару – 2018

## Июльтен илсе тӑма

**«Ҫӗнтерӳ ялавӗ» хаҫата июль уйӑхӗнчен илсе тӑма малалла ҫырӑнтараҫҫӗ.**

**Хаҫата почта уйрӑмӗсенче ултӑ уйӑха ҫырӑнмалли хак – 434 тенкӗ те 22 пус.**

Салам

**ХИСЕПЛĔ ЕНТЕШСЕМ! ЯЛ ĔÇЧЕНĔСЕМ!**

Сире пурне те районти «Акатуй» уявĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Кăçал вăл 65-мĕш хут иртет.

Çын ĕçпе илемлĕ теççĕ. Пирĕн район çыннисем вара ĕçе мĕнпур кăмăлтан тума хăнăхнă. Вырăнсенче ĕçе пĕлсе йĕркеленипе, кашни ял ĕçченĕ тăрăшуллă пулнипе çур акине йĕркеллĕ ирттертĕмĕр. Çур акинче тăрăшса ĕçленĕ кашни çынна, водительпе механизатора, ял хуçалăх специалистне, ял хуçалăх предприятийĕн тата хресчен (фермер) хуçалăх ертӳçине çакăншăн чĕререн тав тăватпăр.

Халĕ умра тепĕр тĕллев – акса-лартса хăварнă ял хуçалăх культурисене тухăçлă çитĕнтермелле, вылăх апатне çителĕклĕ таран хатĕрлемелле, тăван çĕр çинче экологи тĕлĕшĕнчен таса та пахалăхлă ял хуçалăх продукцине ытларах туса илмелле.

Эсир малашне те хăвăр ĕçе чун-чĕре хушнă пек пурнăçласса шанас килет. Ĕçĕрсем малашне те ăнсах пычăр.

Пурне те телейлĕ вăрăм кун-çул сунатпăр. Сывлăхăр чир-чĕр мĕнне ан пĕлтĕр. Çемьере юратупа килĕшӳ, тăнăç пурнăç хуçаланччăр. Çумра вара ырă çынсем кăна пулччăр.

**Район пуçлăхĕ – депутатсен район Пухăвĕн председателĕ И. НИКОЛАЕВ.**
**Район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. ТИМОФЕЕВ.**

**ХАКЛĂ СОЦИАЛЛĂ ĔÇЧЕНСЕМ, ÇАК ĔÇĔН ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Сире хăвăрăн професси кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр.

Питĕ кирлĕ ĕç тăватăр эсир. Вататă çынсене, вăрçăпа ĕç ветеранĕсене, йывăр лару-тăрăва кĕрсе ӳкнĕ çемьесемпе ачасене пулăшатăр, вĕсен ыйтăвĕсене тивĕçтеретĕр. Вĕсемпе ăшшăн калаçса чунĕсене уçатăр, малашлăха шанчăкпа пăхма вăйхал хушатăр.

Тавах сире иксĕлми чăтăмлăхшăн, чун ăшшишĕн, ырă кăмăлăршăн, хăвăр ĕçе юратса пурнăçланăшăн.

Яланах çирĕп сывлăхлă пулăр. Кун-çулăр вăрăм та телейлĕ килтĕр. Çынна ырă туни хăвăр пата та ырăпах таврăнтăр.

**Район пуçлăхĕ – депутатсен район Пухăвĕн председателĕ И. НИКОЛАЕВ.**
**Район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. ТИМОФЕЕВ.**

Пирĕн юратнă, хаклăран та хаклă çыннăмăр – Çатракасси ялĕнче пурăнакан **Галина Васильевна СМИРНОВА** июнĕн 5-мĕшĕнче 70 çул тултарчĕ. Сумлă юбилей ячĕпе аннене, асаннене, хунямана, кукамая чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, юхан шыв юххи пек вăрăм кун-çул, канлĕ ватлăх сунатпăр. Утас çулу такăр пултăр, Турри вăй-хал парса пытăр. Пире, ачусене, тĕрĕс ăс-тăн парса ӳстернĕшĕн, пулăшса пынăшăн, ырă чуншăн, ылтăн аллусемшĕн тавтапуç сана, аннеçĕм. Эпир сана пурте питĕ хытă юрататпăр, санпа мухтанатпăр. Эсĕ пурришĕн савăнатпăр, хамăра çав тери телейлĕ туятпăр. Тайма пуç сана пуриншĕн те.



Тав тăватпăр сана чĕререн,
Таймапуçăм сана пирĕнтен.
Ан чирле, ан ватăл нихăçан,
Пул хаваслă, кăмăллă ялан.
Сывлăх пултăр мĕн ватăличчен,
Пурăнма сунатпăр 100 çулччен.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, ывăлĕсемпе кинĕсем, 10 мăнукĕ, хăти-тăхлачисем.**

Юратнă аннене, кукамая – Ярапайкасси ялĕнче пурăнакан **Енафа Петровна ДАШКОВĂНА** сумлă юбилейпа – 60 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр! Çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, телейпе савăнăç сунатпăр, мĕн ĕмĕтленни пурнăçа кĕрсе пытăр яланах. Пире, ачусене, пăхса ӳстернĕшĕн, пурнăç çулĕ çине кăларнăшăн, чун ăшшине парнеленĕшĕн тав тăватпăр. Эс пулсан пире лайăх, эпир сана юрататпăр.



**Салампа: хĕрĕпе кĕрӳшĕ, ывăлĕсемпе кинĕсем тата 6 мăнукĕ.**

Июнĕн 12-мĕшĕ – Раççей кунĕ

# Тăван çĕршывăмăрăн тĕп уявĕ




Çитес ытларикун, июнĕн 12-мĕшĕнче, патшалăхăн пысăк пĕлтерĕшлĕ уявĕсенчен пĕрне – Раççей кунне паллă тăватпăр. 2002 çулчен вара ăна Раççей патшалăх суверенитечĕ çинчен калакан декларации йышăннă кун тесе уявланă. Раççей кунĕ чи «çамрăк» уявсенчен пĕри пулса тăрать.

1990 çулхи июнĕн 12-мĕшĕнче РСФСР халăх депутачĕсен пĕрремĕш съездĕнче Раççей патшалăх суверенитечĕ çинчен калакан декларацие йышăннă май, çĕршывра Раççей Конституцийĕпе унăн саккунĕсем пуç пулса тăнине палăртрĕç. Çĕршыв çĕнĕ ят илчĕ – Раççей Федерацийĕ (Раççей).

«Никама пăхăнманлăхсăр» пулса тăнисĕр пуçне 1991 çулта çĕршыв историйĕнче пĕрремĕш хут пĕтĕм халăхăн уçă суйлавне ирттернĕ май, Раççей хăйĕн пĕрремĕш Президентне Борис Ельцина суйларĕ. Шăпах вăл хăйĕн 1994 çулхи указĕпе июнĕн 12-мĕшне патшалăх пĕлтерĕшне пачĕ, уява вара Раççей патшалăх суверенитечĕ çинчен калакан декларацие йышăннă кун тесе уявлама пуçăнтăмăр. Кайран вара ăна ансатрах Никама пăхăнманлăх кунĕ теме тытăнтăмăр.

Раççейăн пĕрремĕш Президенчĕ Борис Ельцин 1998 çулта июнĕн 12-мĕшне Раççей кунĕ тесе уявлама сĕнчĕ. Анчах та çĕнĕ ятпа официаллă майпа ăна 2002 çулхи февралĕн 1-мĕшĕнче РФ Ĕç кодексĕн çĕнĕ положенийĕсем вăя кĕнĕ хыççăн кăна уявлама пуçăнчĕç.

2001 çулта Раççей патшалăх суверенитечĕ çинчен калакан декларацие йышăннă кун ячĕпе Кремльте ирттернĕ йышăнура Раççей Президенчĕ Владимир Путин çапла каларĕ: «Çак документран пирĕн çĕнĕ истори пуçланчĕ. Граждан ирĕклĕхĕсемпе саккун пуç пулса тăракан демократи патшалăхĕн историйĕ. Унăн тĕп тĕллевĕ вара – граждансен ăнăçлăхĕ, çителĕклĕхĕ тата ырлăх-пурлăхĕ».

Хальхи вăхăтра Раççей кунĕн пĕлтерĕшĕ ӳссех пырать. Вăл патриотла сĕм илет, пĕтĕм халăх пĕрлĕхĕн символĕ пулса тăрать, кашниех çĕршывăн паянхи тата малашлăхри шăпишĕн яваплă пулнине аса илтерет. Çĕршывĕпех ун ячĕпе тĕрлĕ шайри мероприяти йышлă иртет. Кремльте Раççей Президенчĕ РФ патшалăх премийĕсемпе наградисене парса чыслать. Шупашкарта çав кун Раççей халăхĕсен туслăхĕн парачĕ тата пысăк концерт иртет.

Çĕнĕлĕхсем

# Июнь уйăхĕнчен тытăнса

*Раççей çыннисен пурнăçĕнче кăçалхи июнĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса мĕнле улшăнусем çĕнĕлĕхсем пулса иртрĕç-ха? Кусем вĕсем самолетсем çинче харкашу кăларакан пассажирсемпе, парăмçăсемпе, çул çинчи инкексене çĕнĕлле палăртассипе çыхăннисем т. ыт. те. Çак тата ытти çĕнĕлĕхсене iz.ru портал материалĕнче паллашма пултаратăр.*

**«Ш» знакпа сывпуллашатпăр, европротокол тата çул разметкин çĕнĕ палли**

Июнĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса шиплă резинăпа çӳрекен водительсен автомобиль кантăкĕ çине «Ш» наклейка çыпăçтармалла пулмасть. Кашнин хăйĕн ирĕкĕ.

ОСАГО протоколĕпе европротокол çырассин правили улшăнать. Аварире никам та сиенленмен пулсан, автотранспорт хуçисем ГИБДД экипажне кĕтсе илмесен те пултараççĕ. Инкек пулнине çирĕплетме сăн е видео ӳкерсен те çителĕклĕ. Автомашинăсене çийĕнчех çул çинчен илсе кайса çула ытти автотранспорт валли тасатас пулать.

Тепĕр лайăх хыпар – европротоколпа тӳлессин висине 50 пин тенкĕрен 100 пин тенкĕне çити ӳстернĕ.

Июнĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса çул-йĕр разметкин çĕнĕ стандарчĕ вăя кĕчĕ. Çулсем çинче тĕл пулакан сарă йăрăмсем умри машинăран иртсе кайма юраманнине, çул хĕреслевĕнчи кăвак йăрăмсем хăш еннелле кайма юранине кăтартĕç. «Вафельницăсем» çул хĕреслевĕсенче автомашинăсем пухăнса туласине чакарма тивĕç. Электричествăпа çӳрекен автомашинăна заправка тумалли вырăна кăтартакан паллă та пулать.

**Харкашан пулсан, çуран çӳре**

Июнĕн 4-мĕшĕнчен тытăнса авиаперевозчиксем пассажирсен хăйсен ятарлă «хура списокне» хатĕрлеме пултараççĕ. Самолет çинче харкашу пуçаракансен списокне лекнисене малашне компани самолетпа вĕçме ирĕк памасан та пултарать. Ку йышăнупа килĕшмесен ыйтăва судра кăна татса пама тивĕ. Çыннăн Тăван çĕршыва таврăнма урăхла май çук пулсан кăна ăна самолетпа вĕçме йышăнĕç.

**Паллă мар абонентсем пулмаççĕ**

Июнь уйăхĕнчен тытăнса сотовăй çыхăну операторĕсен корпоративлă абоненчĕсем саккунлă мар пулса тăма пултараççĕ. Июнĕн 1-мĕшĕнчен «О связи» Федераци саккунне кĕртнĕ улшăнусем вăя кĕчĕç. Вĕсем SIM-карттăсемпе саккунлă мар йĕркепе сутă тунипе кĕрешессипе çыхăннă.

Малашне оператора хăйсем пирки тĕп-тĕрĕс информаци панисем кăна мобильлĕ çыхăнупа усă курма пултарĕç.

**Парăмçăсем валли – çĕнĕ правилăсем**

Парăмçăсемпе вĕсен кредиторĕсен хутшăнăвĕсене пырса тивекен çĕнĕ правилăсем вăя кĕчĕç. Займ илессин йĕрки çирĕпленет. Унччен заем чи пĕчĕк ĕç укçин 10 хут пысăклатнă висинчен иртет пулсан, кредиторпа çырса килĕшӳ тума тивнĕ. Халĕ вара заем 10 пин тенкĕрен иртет пулсан, енсен кун пек килĕшӳ тумалла пулать.

**Присяжнăйсен ĕç хушăнать**

Июнь уйăхĕнчен присяжнăйсен сучĕ татса пама пултаракан преступленисен шучĕ анлăланать. Çак вăхăтчен Раççей присяжнăйĕсене сайра-хутра кăна ĕçсене пăхса тухма йыхравланă. 2016 çул вĕçĕнче йышăннă саккунпа присяжнăйсен сучĕпе усă курассине анлăлатнă. Асăннă улшăнусем кăçалхи июнь уйăхĕнчен вăя кĕчĕç. Çапла вара халĕ çынна вĕлернипе, çынна хĕненине пула вăл вилнипе, патшалăх тата общество ĕçченĕсене, право сыхлав органĕсен тата суд сотрудникĕсене тапăннипе çыхăннă преступленисене те присяжнăйсен сучĕ пăхса тухма пултарать.

Ĕçе пăхса тухма присяжнăйсен судне явăçтарасси пирки йышăнăва вара айăпланакан хăй тума тивĕç.

**Бизнеса усăрах тăваççĕ**

Федераци налук службин çирĕплетнĕ тăрăх, пĕрле çыхăнса ĕçлекен предпринимательсен пирки пĕлме майсем ытларах пулаççĕ. Июньтен тытăнса Федераци налук службин «Прозрачный бизнес» онлайн-сервисĕ ĕçлет. Унта малашне компанисем пирки налук вăрттăнлăхĕпе çыхăнман пĕтĕм информаци усă пулĕ.

Тӳрĕ ыйту – тӳрĕ хурав

# «Светофор вырнаçтарма май çук-ши?»

«Тӳрĕ ыйту – тӳрĕ хурав» телефон номерĕпе шăнкăравлакан çын **Катькас ялĕнче пурăнакан Зиновий** пулчĕ. Зиновий çул-йĕр хăрушсăрлăхĕпе çыхăннă ыйтăва хускатрĕ.

Вулакан каласа панă тăрăх, Катькас ялĕпе юнашарах М-7 трасса иртет. Автотранспорт кунта талăкĕпех каллĕ-маллĕ сахал мар хутлать. Çул хĕрринчи обществăлла автотранспорт чарăнмалли вырăнпа юнашарах çуран çӳрекенсене çул урлă каçса çӳреме ятарлă вырăн – «зебра» – туса панă.

Паллă ĕнтĕ, çул-йĕр çӳремелли правилăсемпе килĕшӳллĕн, çул урлă «зебрăпа» каçакан çынсене кирек епле транспорт хатĕрĕ те чарăнса тăрса ирттерсе яма тивĕç. Анчах та пуçтахрах водительсем асăннă правилăсене пăхăнсах каймаççĕ иккен.

Зиновий çакăн пек тĕслĕхе те аса илсе каласа кăтартрĕ. Пĕррехинче хайхи çак вырăнпа çул урлă пĕр çамрăк каçма тытăннă иккен. Хăлхинче наушник тет. Ахăртнех телефонпа юрă итлет пулĕ. Халĕ кун пеккине тăтăшах курма пулать вĕт. Ĕçĕ унра мар. Çулпала пысăк хăвăртлăхпа килекен вуншар тонна таякан КамАЗ çак йĕкĕт патне çитеспе аран чарăнса ларма пултарчĕ тет. Çамрăк кăшт кăна фура кустăрмисем айне пулман иккен.

Çавна май Зиновий Катькас ялĕ патĕнче çынсем çул урлă каçмалли вырăнта светофор вырнаçтарасси пирки ыйту çĕклет. «Калайкасси патĕнчех ку тĕлĕшпе пĕтĕмпех йĕркеллĕ. Светофор хĕрлĕ çутатнă чухне транспорт хатĕрĕсем епле пулсан та чарăнаççĕх. Çуран çӳрекенсем те çул урлă пĕр шиксĕр каçайраççĕ», – тет.

Федераци трасси çинче светофор вырнаçтарасси район шайĕнче татса памалли ыйту мар ĕнтĕ. Çавăнпа та Зиновий ыйтăвĕпе тӳрех Чăваш Республикин Транспорт тата çул-йĕр хуçалăх министерствине çырупа тухма тиврĕ. Акă мĕнле хурав илтĕм нумаях пулмасть асăннă ыйту çине **транспорт тата çул-йĕр хуçалăх министрĕн çумĕнчен Е. Павловран:**

«Федераци пĕлтерĕшлĕ М-7 «Волга» автомобиль çулĕ çинче Катькас ялĕ патĕнче çуран çӳрекенсем çул урлă каçмалли вырăнта светофор вырнаçтарассин ыйтăвне сӳтсе явнă май, Чăваш Республикин Транспорт тата çул-йĕр хуçалăх министерстви çавна пĕлтерет.

Хальхи вăхăтра федераци пĕлтерĕшлĕ пурте усă куракан М-7 «Волга» автомобиль çулĕн Чăваш Республикин территорийĕнчи участокĕ федерацин Хусан хулинчи «Волго-Вятскуправтодор» хысна учрежденийĕн оперативлă управленийĕнче шутланать. Апла пулсан М-7 «Волга» автомобиль çулĕ çинче Катькас ялĕ патĕнче çуран çӳрекенсем çул урлă каçмалли вырăнта светофор вырнаçтарассин ыйтăвне татса парасси те унăн компетенцийĕнче шутланать. Çавна май министерство ку ыйтăва асăннă учреждение ярса панă, хуравне республика Транспорт тата çул-йĕр хуçалăх министерствине пĕлтерме ыйтнă.

Ыйтăва татса парассипе мĕнле йышăну пулни пирки кайрантарах пĕлтерĕпĕр».

Хальлĕхе Зиновий ыйтăвĕ çине çакăн пек хурав панипех çырлахма тивет. Çапах та пĕлтерĕшлĕ ыйтăва вулакана тивĕçтерекен татса парасса шанмалли кăна юлать. Министерстварăн хурав илсенех эпир те вулакансене ун пирки çийĕнчех пĕлтерĕпĕр. Сирĕнтен ыйтусем кĕтетпĕр.

**«Тӳрĕ ыйту – тӳрĕ хурав» телефонĕсене аса илтеретĕп: 62-2-82, 8-927-857-42-06.**

**В. ШАПОШНИКОВ хатĕрленĕ.**

Кусман пурлăх

# Кадастр хакĕпе паллашма пулать

**Чăваш Енре 2018 çулта 760 пин капиталлă строительство объекчĕн тата 136 пине яхăн промышленноç е урăх ятарлă пĕлтерĕшлĕ çĕрсен патшалăх кадастр хаклавне ирттернине пĕтĕмлетнĕ.**

«Чуваштехинвентаризация» бюджет учрежденийĕн официаллă сайтĕнче «Кадастровая оценка» (chuvti.ru) пайра 2018 çулхи майăн 28-мĕшĕ тĕлне малтанласа кадастр хакне палăртнă объектсен списокне вырнаçтарнă. Çак списокпа, йĕркелӳпе право формине пăхмасăр, кирек кам та паллашма пултарать. Объектăн малтанласа палăртнă патшалăх кадастр хакĕпе килĕшмен самантсем пирки объектăн характеристикине çирĕплетнĕ декларацие формипе тăратмалла (237 номерлĕ «О государственной кадастровой оценке» Федераци саккунĕ). Çакăн пек туни пурлăх объекчĕн сведенийĕсене малашне йăнăш каяссинчен асăрхаттарать. Кашни харпăрçă çав списокра хăйĕн пурлăхне кадастр номерĕпе е вырнаçнă адрес тăрăх тупма, çавна май унăн кадастр хакне пĕлме пултарать. Çапла вара пурлăхăн кадастр хакĕ рынок хакĕпе мĕнле шайлашăнса тăнине те палăртайрать.

Кадастр хакĕ тĕлĕшпе асăрхаттарусене икĕ тапхăрта çитерме май туса панă. Пĕрремĕш тапхăрта, июнĕн 8-мĕшĕччен, декларацисене «Чуваштехинвентаризаци» учреждениене йышăннă.

Иккĕмĕш тапхăр, малтанласа пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 2 – августăн 22-мĕшĕсенче иртет. Харпăрçăсем хăйсен пурлăхĕн сведенийĕсене тĕрĕслесе йăнăшсем пуррине палăртнă хыççăн, декларацие шăпах çак тапхăрта «Чуваштехинвентаризаци» учреждение е МФЦ-на харпăр хăй, е почта урлă, е Интернет урлă (вăл шута Патшалăх тата муниципалитет услугисен пĕрлехи порталĕ те кĕрет) çитерме тивĕç.

«Чуваштехинвентаризация» бюджет учрежденийĕн (Шупашкар хули, Бабушкин тăкăрлăкĕ, 8 çурт, 3 пӳлĕм; ĕç вăхăчĕ: 8.00 –17.00 сех., апатлану вăхăчĕ: 12.00 – 13.00 сех.; тел.: 57-03-07) официаллă сайтĕнче декларации тата заявлени формине те вырнаçтарнă.

**Н. НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.**

«Халăх инвентаризацийĕ»

# Кашни çурт-йĕр шутра пулмалла

Муркаш район территорийĕнче никам та усă курман, пăрахнă, çавăн пекех аварийлĕ лару-тăрури капиталлă строительство объекчĕсене тупса палăртассипе «Халăх инвентаризацийĕ» акци малалла пырать.

Каласа хăвармалла, çак акцие ирттерме Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Михаил Игнатьевăн 2017 çул валли янă Çырăвĕнче палăртнăччĕ. Акци граждансем, общественноç, массăллă информаци хатĕрĕсем хутшăннипе иртет.

Инвентаризаци вăхăтĕнче пушшăн ларакан, пăрахнă кусман пурлăх объекчĕсене – тĕрлĕ çурт-йĕре, сад е дача пӳрчĕсене тата ыттине те тĕрĕслесçĕ. Акци вăхăтĕнче культура еткерлĕхне уйрăм тимлĕх уйăраççĕ. Çавна май муниципалитетсен харпăрлăхĕнчи япăхса кайнă культура е истори палăкĕсене те палăртаççĕ. Паллах, ответлăха туйман харпăрçăсене объектсене тĕрĕс-тĕкел пăхса тăмаллине те асăрхаттараççĕ.

2018 çулхи июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне Муркаш район территорийĕнче «Халăх инвентаризацийĕ» акци вăхăтĕнче 31 объект тупса палăртнă. Вĕсенчен 87 процентĕ – хусалăх тата налук çаврăнăшĕнче. Тупса палăртнисенчен 27 объекта (93 процент) Росреестрăн хуçасăр объектсем тесе йышăннисен учетне тăратнă.

Муркаш район администрацийĕ умĕнче тупса палăртнă пур объекта та хуçалăх тата налук çаврăнăшне кĕртес, киввисене юсаса çĕнетес е пăрахăçласа ыйтусем тăраççĕ.

Акци 2018 çулта малалла пырать. Уйрăм çынсен объекчĕсен секторне те тимлĕх уйăраççĕ. Çапла вара граждансене (харпăрçăсене), еткерçĕсене харпăрлăх правине регистрацилесси пирки тепĕр хут аса илтереççĕ.

Енчен те ялсенче пушанна, кивĕ çуртсем, хуралтăсем пирки пĕлекенсем пулсан, ку хыпара район администрацине пĕлтермелле. Объекта малашне мĕнле усă курма май пуррипе те сĕнӳсем пулма пултараççĕ. Сăмахран, ача-пăча валли площадка, социаллă объект тата ыттине те тума пулать.

Кун пек хыпара Чăваш Республикин Юстици министерствине те çитерме юрать: 428018, Шупашкар хули, К. Иванов урамĕ, 84 çурт.

**ЧР Юстици министерствин материалĕ тăрăх хатĕрленĕ.**

Икĕ алла пĕр ĕç

# Ял çыннисене те пулăшать




**Çынсен харпăрлăхĕнче техника хатĕрĕ йышланни пирĕн халăхăн пурнăç шайĕ ӳснине çирĕплетет. Ку лайăх-ха, анчах унпа пĕрлех яваплăха ӳстерни те ытлашши пулас çук. «Кашни çыннăн хăй ĕçĕнче ответлăха туймалла. Хăйĕнпе пĕрле е юнашар ыттисем ĕçлени пирки манмалла мар», – калаçăва ĕç хăрушсăрлăхĕ çине куçарса калаçрĕ Ильинка ял тăрăхĕнчи Кĕрекаçра пурăнакан Дмитрий Гусев (сăн ӳкерчĕкре).**

**Юлашки çулсенче ял çынни çĕр ĕçĕ валли ытларах та ытларах трактор-прицеп тата кăкарса ĕçлемелли техника хатĕрĕ туянать. 32 çулхи Дима та – вĕсен йышĕнче. МТЗ - 82 трактор пулăшнипе вăл ашшĕ-амăшĕн пай çĕрĕсемпе тата килти хушма хуçалăхри 1 гектар çĕрпе тухăçлă усă курать. «Çĕрпе ĕçлесен вăл çум айне пулса пите хĕретмест. Ун çинче техникăпа тĕллевлĕ усă курни çу каçа выльăх-чĕрлĕх усрамалăх выльăх апачĕ янтăлама май парать», – кăмăллăн калаçать Дмитрий Владиславович. Манăн çĕнĕ пĕлĕшĕм камин цехĕнче вăй хурать пулсан та, сменăран тухсан техника пулăшнипе килти ĕçсене пурнăçлать, ял çыннисене пулăшать.**

**– Кăçал хамăн «хурçă ута» техника тĕрĕслевне вăхăтра тăратрăм. Паян вара куллен майлах шанчăклăн ĕçе тухатăп. Çурхи ака-сухана тăрăшуллă ирттертĕм те «симĕс ĕç çире» те пит хĕретмĕп тесе шутлатăп. Çак ĕмĕтпе эпĕ иртен пуçласа сĕм тĕттĕмччен улăх-çаранта, – терĕ Д.Гусев харпăрлăхри техника юсавлă ĕçленишĕн хĕпĕртесе.**

**Харпăрлăхри çĕрпе туллин усă куракансер хушма хуçалăха та ăнăçлă аталантарать, çемье бюджетне те тивĕçлĕ шайра тытать.**

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

Сывлăх сыхлавĕ

# Эмеле Интернет урлă туянмаллах-ши?

Хальхи вăхăтра нумайăшĕ ată-пушмак, çи-пуç Интернет урлă туянать.

Юлашки вăхăтра вара телевиденипе Интернет урлă эмел туянма май пуррине те рекламăлаççĕ. Çапах та электрон аптекăсенчен эмел туянма шанчăклах маррине чылай çын палăртать.

Пĕтĕм тĕнчери сывлăх сыхлав организацийĕн даннăйĕсем Интернет урлă сутăнакан эмел препарачĕсен 10 процентĕ чăн эмел препарачĕ маррине кăтартса парать. Тепĕр тесен, эмеле ăçта, мĕнле условисенче туса хатĕрленине те, упраннине те чăнласа пĕлместĕн. Рецептпа кăна сутмалли эмеле Интернет урлă рецептсăрах сутатпăр тени те хăйне май асăрхаттару пулмалла. Апла пулсан электрон аптекăран туяннă эмел сывлăхшăн хăрушлăх кăларса тăратма та пултарать.

Раççей Федерацийĕн 2002 çулхи февралĕн 6-мĕшĕнчи 81 номерлĕ постановленийĕпе медикаментсене дистанци мелĕпе сутма чарнă. Анчах та, каласа хăвармалла, аптекăра пур эмел препарачĕсем пирки информацие Интернет урлă сарма юрать. Эмел туянакан çын хăйĕн хулинчи аптека сайтĕнче унта кирлĕ эмел пуррине курать, леçсе пама ыйтма пултарать (ку услуга аптекăн пур пулсан). Çакă куçса çӳреме чăрмав пуррисемшĕн уйрăмах меллĕ. Çапах та аптекăна кĕрсе эмел пирки тĕплĕ ыйтса пĕлме май пур пулсан, çапла туни шанчăкларах.

**Хамăр инф.**



Саламлатпăр



Хаклă та юратнă çыннăмăра – Муркашра пурăнакан **Алевтина Георгиевна МАСТЕРОВĂНА** илемлĕ юбилей ячĕпе чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, савăнăç сунатпăр.

Пул ялан хавас та ырă,
Ан пĕлсем чир-чĕр мĕнне.
Чунупа пул ĕмĕр çамрăк,
Телейпе пĕрле çӳре.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕ, ывăлĕпе кинĕ, мăнукĕсем, йăмăкĕ, хунямăшĕ, сывăх тăванĕсем, юлташĕсем.**

Райадминистрацире

# Хисеп грамотипе наградăланă

Район администрацийĕн 2018 çулхи майăн 3-мĕшĕнчи 428-мĕш номерлĕ йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

1. Çитĕнекен ăрăва вĕрентсе воспитани парассипе тунă çитĕнӳсемшĕн тата нумай çул хушши тăрăшса вăй хунăшăн:

**– Виталий Александрович ПРОКОПЬЕВА,** Çатракасси вăтам шкулĕн директорне.

2. Нумай çул тăрăшса вăй хунăшăн:

**– Владимир Алексеевич МАТВЕЕВА,** Ильинка вăтам шкулĕн газ котельнăйĕн операторне.

* * *

Çынсен сывлăхне сыхлас ĕçе тӳпе хывнăшăн тата нумай çул хушши тăрăшса вăй хунăшăн район администрацийĕн 2018 çулхи майăн 7-мĕшĕнчи 457-мĕш номерлĕ йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

**– Татьяна Анатольевна ЕВСТАФЬЕВĂНА,** Муркаш район тĕп больницин терапи уйрăмĕн медицина сестрине;

**– Светлана Сергеевна ПАВЛОВĂНА,** Муркаш район тĕп больницин педиатри уйрăмĕн медицина сестрине.

* * *

Район администрацийĕн 2018 çулхи майăн 15-мĕшĕнчи 490-мĕш номерлĕ йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

1. Çитĕнекен ăрăва çарпа патриотика воспитанийĕ пама тӳпе хывнăшăн тата çамрăк армеецсен районти «Зарница» тата «Орленок» вăйăисен ячĕпе:

**– Владимир Гурьевич ЛЬВОВА,** Муркаш вăтам шкулĕн ОБЖ преподаватель-йĕркелӳçине;

**– Игорь Вячеславович СЕМЕНОВА,** Мăн Сĕнтĕр вăтам шкулĕн ОБЖ преподаватель-йĕркелӳçине;

**– Александр Леонидович СЫТИНА,** Юнкă вăтам шкулĕн ОБЖ преподаватель-йĕркелӳçине.

2. Çитĕнекен ăрăва вĕрентсе воспитани парассипе тунă çитĕнӳсемшĕн тата нумай çул хушши тăрăшса вăй хунăшăн:

**– Валентина Ивановна АЛЕКСЕЕВĂНА,** Оринин вăтам шкулĕн историпе обществознани учительне.

* * *

Çитĕнекен ăрăва вĕрентсе воспитани парассипе тунă çитĕнӳсемшĕн тата нумай çул хушши тăрăшса вăй хунăшăн район администрацийĕн 2018 çулхи майăн 31-мĕшĕнчи 556-мĕш номерлĕ йышăнăвĕпе район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

**– Ирина Григорьевна ГРИГОРЬЕВĂНА,** Оринин вăтам шкулĕн директорĕн çумне.

* * *

Ял хуçалăх производствинче нумай çул хушши тăрăшса вăй хунăшăн район администрацийĕн 2018 çулхи июнĕн 1-мĕшĕнчи 558-мĕш номерлĕ йышăнăвĕпе район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

**– Альберт Михайлович АНТОНОВА,** Ильич яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн тракторист-машинистне.

Сăмах – ветерана

# Чикĕ леш енчи служба асрах

Çулсем иртеççĕ, вăхăт шăвать, пулни-иртни историе кĕрсе юлать, анчах астăвăмра çырăнни, çулсем иртеççĕ пулсан та, манăçмасть. Нарăсăн 15-мĕшĕ – çар службине хамăр çĕршыв тулашĕнче пурнăçланисен астăвăм кунĕ. Раççейре ăна халĕ çулсеренех паллă тума пуçларĕç. Кăçал та çав кун Шупашкарти Çĕнтерӳ паркне Тăван çĕршыв тулашĕнче çар службинче тăнă ветерансем нумаййăн пуçтарăнчĕç. Мана та, ГСВГ (Совет çарĕсен Германири ушкăнĕ) ветеранĕсен канашĕнче тăнă май, çак тĕл пулăва хутшăнма тӳр килчĕ. Тĕл пулу питĕ кăмăллă иртрĕ. Малтанах ветерансен стройĕ умĕпе ГСВГ ялавне çĕклесе иртрĕç, ГСВГ гимнĕ янăрарĕ. Унтан митинг пуçланчĕ. Тухса калаçакансем те чылаййăн пулчĕç. Ветерансен юхăмне сарассипе уйрăмах палăрнисене Хисеп грамотипе чысларĕç.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи Çĕнтерӳпе вĕçленсен те, çĕнĕрен вут-çулăм тухас хăрушлăх çухалман. Çавăнпах ĕнтĕ пирĕн çарсен ушкăнне Германи çĕршывĕнче хăварма йышăннă. Кунпа пĕрлех пирĕн çарсем фашистсене хăваласа кăларнă çĕршывсенче те – Австрире, Венгрире, Чехословакире, Польшăра – пирĕн çар ушкăнĕсем юлнă.

1945 çулхи июнĕн 10-мĕшĕнче Германире юлнă пирĕн çарсене ертсе пыма Г. Жуков маршала çирĕплетеççĕ. Çур ĕмĕре яхăн тăсăлать çак пурнăç. 1994 çулхи августăн 31-мĕшĕнче пирĕн юлашки салтака унтан илсе тухиччен Германи çĕршывĕнчи пирĕн çарсен ушкăнĕнче 8,5 миллион çамрăк хăйĕн çар тивĕçне пурнăçлать. Каламалла, ку вăл пирĕн Тăван çĕршывăн чи малти чикки шутланнă. Унти службăна чи шанчăклисене çеç илнĕ.

Мирлĕ вăхăт пулнă пулин те, çав 49 çул хушшинче инçетри çар службинчен тĕрлĕ сăлтава пула нумай çамрăк тăван киле таврăнайман, йывăр суранлисем те чылай пулнă. 1962 çулта манăн та ГСВГ госпиталĕнче сипленме тиврĕ. Кунта мĕн курнисем халĕ те куç умĕнчех. Акă пĕр çамрăк салтакăн сывату курсĕ вĕçленнĕ хыççăн ăна киле ăсатма нумаййăн тухрĕç. Унăн икĕ алли те çукчĕ, куçĕ курмасть. Ăна киле çитерме виçĕ салтака уйăрнăччĕ: пĕри чăматан йăтнă, иккĕшĕ черетпе çавăтса пыратчĕç. Ăсатма тухнисем те, çар тухтăрĕсем те макăратчĕç. Вăл анчах «хаваслăччĕ»: пире Тăван çĕршыва сывă таврăнма сунса уйрăлчĕ.

1968 çулта Чехословакире усал вăйсем мирлĕ пурнăçа татма тăрсан, хирĕçтăрăва сӳнтерме чи малтанах ГСВГ çарĕсем хутшăннă: 1-мĕш танк армийĕн 9-мĕшпе 11-мĕш танк дивизийĕсем тата мотострелоксен 6-мĕш дивизийĕ. Çак «Дунай» ятлă операцире пирĕн 34 çамрăк пуç хунă. Çур ĕмĕр хушшинче пĕчĕк-пысăк çухатусем татах пулнă, анчах вĕсем пирĕн салтаксен приказ пурнăçлавне пăсайман. Çавăнпа та манăн паян хамăр çĕршывăн конституци тивĕçне Германи çĕршывĕнче чыслăн пурнăçланă ветерансене, салтак атти тăхăннă, салтак пăтти çисе курнă пакунлă çынсене вăрçă вучĕ вăй илесрен сыхланăшăн тав сăмахĕ калас килет, ыттисене те вĕсене хисеплеме сунас шут пур.

Хамăн сăмахăма ГСВГ ветеранĕн Андрей Зиминăн сăввинчи йĕркесемпе вĕçлетĕп:

«Дед писал на Рейхстаге,
Я сбоку добавил,
Что три года их жизни
Своей тут оставил.
Вы простите меня,
Запоздалая муза.
Я солдат самой
Западной группы Союза».

**Г. ОСИПОВ,**
**ГСВГ ветеранĕ.**

Пĕтĕмлетӳ

# Конкурс çĕнтерӳçи



Хăйне шаннă ĕçе яваплăха туйса пурнăçлакансем районăмăр пурнăçĕнче пулнă, пур, пулĕç те. Çапла пĕтĕмлетӳ турăм эпĕ Чăвашпотребсоюз правленийĕпе район хаçачĕн редакцийĕ ака – çу уйăхĕсенче ирттернĕ «Манăн райпо» конкурса килнĕ çырусене тишкерсе. Асăннă конкурс пирĕн вулакансемшĕн интереслĕ пулни унта хутшăнас текенсен йышĕ пысăккинчен те курăнчĕ. Райпо тытăмĕнче ĕçленĕ, унăн пулăшăвĕпе усă курнă кашни тĕслĕх çырусенче тĕп вырăнта пулчĕ.

Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Галина Столяровăн та хăй ĕçленĕ вăхăтрине ырăпа аса илмелли чылай. Ĕç вырăнне улăштармасăр 37 çул Мăн Сĕнтĕрти «Гастроном» магазинти ĕç коллективне ăнăçлă ертсе пынă ветеран Мăн Сĕнтĕр райпоне паян çирĕппĕнех манăн райпо тенинчен никам та тĕлĕнмест. Çавăнпа та йĕркелӳçĕсем пĕр çын пек пулса унăн çырăвне конкурс çĕнтерӳçи тесе йышăнчĕç.

– Пурнăç пĕр вырăнта тăмасть. Мăн Сĕнтĕр райповĕ аслă ăрурисен ĕçне шута хуни, вĕсемпе канашлама май тупни, малахри пуçарусене çиччĕ виççе аталантарни пирĕн ĕç паян та пурăнни пирки калать. Çамрăксем ăна алла илсе, çĕнĕлĕхсемпе пуянлатса малалла илсе пыни юратнă райпо аталанăвĕнче уççăн курăнать. Уншăн эпĕ питĕ хавас, – терĕ Галина Власовна хăйне конкурсра çĕнтернĕ ятпа саламланă хыççăн.

Пурнăçри рынок хутшăнăвĕсенче çухалса кайман Мăн Сĕнтĕр райповĕ малашне те халăхшăн ĕçлесси, çак ĕçре пахалăх ыйтăвне тĕп вырăнта тытасси ку тăрăхра пурăнакансене никама та иккĕлентермест. Çавăнпах вĕсем райпопа яланах туслă çыхăнура.

Кунсерен тĕллевлĕ ĕçлени пите хĕретмест. Малархри çулсенче тунă ӳсĕмсемшĕн савăнса, аталану çулĕсене курса ĕçлени – паянхи ĕç коллективĕн никĕсĕ. Мăн Сĕнтĕр райповĕн ĕç кăтартăвĕсем, ӳсĕмĕсем, хутшăнăвĕсем хăйне савăнтарнине Г. Столярова пытармарĕ.

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

Çĕнтерӳçĕсен йăхĕнчен

# Вĕсем яланхиллех стройра

Иртнĕ шăматкун, çĕртме уйăхĕн 2-мĕшĕнче, «Сывлăх» спорт шкулĕнче çар ветеранĕсен тĕл пулăвĕ иртрĕ. Унта пирĕн çарсен Германири ушкăнĕнче службăра тăнисен республикăри туслăх спартакиади иртрĕ.

Канупа туслăх хуçаланнă спорт ăмăртăвĕсене районсемпе хуласенчен 8 команда килсе çитрĕ. Кашнин кăкăрĕ çинчи медальсем ветерансем çамрăклăх çулĕсене мирлĕ пурнăç хуралĕн малти шайĕнче шанчăклă ирттернине çирĕплетеççĕ.

Спартакиадăна совет çарĕсен Германири ушкăнĕнче службăра тăнă ветерансен ЧР канашĕн председателĕн çумĕ В. Смирнов, штаб пуçлăхĕ Н. Яловенко, район уйрăмĕн ертӳçи Г. Ефимов уçрĕç.

– Çĕршыври тĕп командованин приказĕпе Аслă Çĕнтерӳ хыççăн совет çарĕсен Германири оккупаци ушкăнне (каярахпа – совет çарĕсен Германири ушкăнĕ) йĕркеленĕ. Тĕрлĕ çулта унта службăра пулнисем хамăр çĕршывăн чи инçетри чиккисене хӳтĕлерĕç. Çак йышра эсир ăнсăртран пулманнине паянхи туслăх ăмăртăвĕсем çирĕплетĕç, – терĕ Валерий Смирнов.

Ăмăртусем вăтам дистанцире чупса, пăт пуканĕ çĕклесе, дартс вăййинче тата пневматика винтовкинчен тĕл персе, мечĕк тĕл тапса, волейболла выляса иртрĕç. Çĕнтерӳçĕсем дипломсемпе медальсене тивĕçрĕç.

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**




# Салтак ятне ямарăмăр



Совет çарĕсен Германире тăнă ушкăнĕнче (ГСВГ) 1945 çулхи июнь уйăхĕн 9-мĕшĕнчен пуçласа 1994 çулхи августăн 31-мĕшĕччен 8,5 миллион çын çар тивĕçне пурнăçланă. Вĕсен шутĕнче пирĕн районти каччăсем те йышлă. «Асаттепе аттесен çĕнтерĕвне малалла тăсрăмăр, шăпа пӳрнипе эпир те мирлĕ пурнăçа хӳтĕлерĕмĕр», – терĕç асăннă ушкăн ветеранĕсем. Эсир паянхи сăн ӳкерчĕкре ГСВГра тĕрлĕ çулта çĕршыв умĕнчи çар тивĕçне чыслăн пурнăçланисене куратăр. Вĕсем (сулахайран сылтăмалла): 1980 – 1982 çулсенче службăра тăнă Шомик каччи Юрий Николаев, Москакассинче çуралса ӳснĕ Геннадий Кондратьев (1981 – 1983ç.ç.), Вăрманкас Хачăкри Николай Сандимиров (1980 – 1982ç.ç.). «Ответлă вырăнта службăра тăма тиврĕ пире. Йывăрлăхсене çĕнсех вăрçă вутне чĕрĕлме памарăмăр. Манăн атте Ленинград блокади витĕр тухнă разведчик, 2-мĕш ушкăн инваличĕ. Вăл фашистсен ирсĕрлĕхĕ пирки калани мана службăра ялан сыхă пулма хушатчĕ. Эпĕ калани манăн юлташсемшĕн те вăрттăнлăх пулма кирлĕ мар. Мĕншĕн тесен вĕсен куккăшĕсемпе мучăшĕсем те паянхи мирлĕ пурнăçшăн вăрçăра юн юхтарнă», – терĕ юлташĕсем хăйĕнпе килĕшнине ăнланса Юрий Яковлевич.

«Çĕнтерӳçĕсен йăхĕ», – пĕтĕмлетрĕм эпĕ хамăрăн кĕске калаçăва.

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

Ял хăтлăхĕ

# Хаçатра çырнă хыççăн

Урамри хăтлăх çине юлашки вăхăтра уйрăмах пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Ял тăрăхĕн администрацийĕ маларах пĕлтернĕ кунхине çынсен кил-çурт таврашĕнчи йăлари хытă каяша ятарлă машина тиесе каять. Ял урамĕсем те малтанхи çулхисенчен самай тирпейлĕ, субботниксене, йывăç-тĕм лартас уйăхлăхсене çынсем активлă хутшăнаççĕ.

Ку тĕлĕшпе редакцие Якаткассинчи Егор Васильевран çыру килнĕччĕ, вăл ял хăтлăхĕшĕн пăшăрханать. Автор унта хăйсен ялĕнчи пĕр кил-хуçалăх умĕнчи тирпейлĕх шайĕпе кăмăлсăр пулнине пĕлтернĕччĕ. Асăннă çыру район хаçатĕнче кун çути курнă хыççăн Галина Федорова хăйĕн кил-çурчĕ умĕнчи тирпейлĕхе сăн ӳкерсе килчĕ. Вăл каланă тăрăх, хăйсен тĕлĕнчи хăтлăха малтан та тытса пыма тăрăшнă.

Тăрăшуллă хĕрарăмран ыттисем те тĕслĕх илсен питех те кăмăллă пулмалла. Ял, урам илемĕ кашни уйрăм çурт тĕлĕнчи хăтлăхран килет.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**



# Килте усă курма

**– Лакпа витнĕ пушмака ҫĕнетме-ҫутатма кантăк ҫумалли шĕвекпе сăтăрмалла.**
**– Ҫутă тĕслĕ кедăна лайăх тасатма ҫак хутăшпа усă кур: савăт-сапа ҫумалли шĕвек, сода, водород перекисĕ (1:2:3).**
**– Пушмак кремĕ типсен, ăна темиҫе тумлам сĕтпе хутăштарни пулăшать.**
**– Тĕксĕм джинс ҫуталасран ăна ҫунă чух шыва ҫур стакан уксус хушмалла.**
**– Вырăн таврашне лайăх шуратма ҫăвас умĕн аспирин ирĕлтернĕ ăшă шыва ислетмелле (1 литр шыва 2 таблетка).**



## Кил тата хушма хуҫалăх

Алă ăсти

# «Юрататăп тумтир ҫĕлеме»



**Кашни ĕҫĕн йĕрки пур. Ăна пăхăнсан ҫеҫ алла тытнă ĕҫ ăнать, унăн пахалăхĕ лайăхланать, тупăш ӳсет. Ҫакна эпĕ хăйĕн ĕҫне чунĕпе парăннă ҫĕвĕҫпе иртернĕ черетлĕ тĕл пулура ҫирĕплетрĕм.**

**Альбина Станкеева (сăн ӳкерчĕкре) Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи Мăн Хураҫкара пурăнать. Мăшăрĕпе Владислав Ильичпа икĕ ывăлпа хĕр ҫуратса ӳстернĕскер, нихăҫан та ĕҫрен катара тăман. Туслă ҫемье килти хушма хуҫалăхра 2 ĕне, сурăхсем, чăх-чĕп тытать, вăкăрсем хĕл каҫарать. Ҫакна пурнăҫлама харпăрлăхри ҫĕрпе пĕлсе усă курать.**

**– Хамăр мĕн пĕчĕкрен ĕҫпе туслă ӳснĕскерсем, ачамăрсене те ҫĕр ĕҫне тата ял пурнăҫне юратма вĕрентрĕмĕр. Тăрăшни харама каймарĕ. Икĕ ывăлăмăр та ялтах тĕпленчĕҫ, – каласа парать Альбина Амоновна.**

**Пурнăҫра ҫĕвĕ машининчен уйрăлманскер, Мăн Сĕнтĕр райповĕ килте суса илнĕ сĕте яла пырсах пуҫтарнишĕн савăннине те пытармарĕ. «Хакĕ пĕчĕкрех-ха та, анчах яланах ҫапла пулмĕ тесе паян «симĕс ĕҫ ҫине» хатĕрленетпĕр», – терĕ вăл калаҫăва малалла тăсса.**

**Ҫĕвĕҫ тенĕрен. Альбина Станкеева, тивĕҫлĕ канурине пăхмасăрах, Мăн Сĕнтĕр райповĕн Москакассинчи ҫĕвĕ цехĕнче вăй хурать. Кĕске калаҫура тумтир, вырăн хатĕрĕсем тата иттине те ҫĕлеме юратнине, Мăн Сĕнтĕр райповĕ ҫакăн ҫине тимлĕх уйăрнине пытармарĕ вăл.**

**А. БЕЛОВ**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**

Ыйту – хурав

# Хĕрлĕ кăшман акма кая мар

**Иртнĕ ҫул хамăн пахчара хĕрлĕ кăшман вăрлăхне туса илтĕм. Ĕҫ ăнни савăнтарчĕ. Кĕркунне ăна пухса кĕртнĕ вăхăтра асăрханмасăр тăпра ҫине ӳксе те юлкаларĕҫ. Кăҫал вара вĕсенчен калча лайăх шăтса тухрĕ. Вĕсене асăрханса йăран ҫине куҫарса лартсан ҫимĕҫлĕ пулăп-ши?**

**Валентина ИВАНОВА.**

**Ярапайкасси ял тăрăхĕ.**

Ял хĕрарăмĕ ку хутĕнче питех те интереслĕ ыйту ҫуратрĕ. Вăл, ман шутпа, паян чылай пахчаҫăна канăҫ памасть. Мĕншĕн тесен кил хуҫи кунашкал лару-тăрупа кашни пахчара майлах тĕл пулать. Ҫавăнпа та эпĕ Валентина Ивановна ыйтăвне юратнă хаҫатăмăр урлă хуравлама кăмăл турăм.

Кĕркунне йăран ҫине ӳксе юлнă хĕрлĕ кăшман вăрринчен паха калча шăтса тухрĕ тенĕрен. Эпĕ те хамăн пахчара ҫулсеренех хĕл умĕн кишĕрпе редис, укроппа пахча кĕпҫи, ешĕл симĕс ҫулҫăллă тата ытти пахча ҫимĕҫ культурипе пĕрле хĕрлĕ кăшман та акса хăваратăп. Ҫуркунне вĕсем тĕрĕс-тĕкелех шăтса тухаҫҫĕ. Ҫу каҫа йĕркеллĕ пăхса ӳстерсен вĕсем сире тухăҫпа та савăнтарасса шанатăп.

Анчах та ҫакна манмалла мар. Хăш-пĕр ҫул (кăҫал та) май уйăхĕ вĕҫĕнчи тата ҫу пуҫламăшĕнчи ҫанталăк сивĕ тăни, каҫсерен тăм та ӳкни кĕркунне акса хăварнă хăш-пĕр тымар ҫимĕҫ культурине палăрмаллах сиен кӳрет. Ҫамрăк калча сивве йывăр чăтса иртерет. Сирĕн лару-тăрура хĕрлĕ кăшман калчине тепĕр вырăна куҫарса лартма пулать-ха, анчах та вăл кайран тунана каяс хăрушлăх пур.

Енчен те эсир ҫак паха ҫимĕҫе кăҫал паян кунччене акса хăварма ĕлкĕреймен пулсан, тăруках пăшăрханма кирлĕ мар. Мĕншĕн тесен хĕрлĕ кăшмана ҫĕртме уйăхĕн вун пиллĕкмĕшĕччен акма юрать. Ĕҫе пуҫăниччен чи малтан вăрлăха лайăх шӳтерсе сăмсалантармалла та унтан нӳрĕ тăпрана (ҫумăр ҫусан е шăварнă хыҫҫăн) 2 – 3 см тарăнăш варăнтармалла. Хĕрлĕ кăшман шăтса тухнă май 2 – 3 ҫулҫă ӳссен ретсенчи кăшман калчине пĕрне тепринчен 4 см хушă хăварса сайралатмалла. Ҫак ĕҫе тата тепĕр хут 5 – 6-шар ҫулҫă сарсан пурнăҫламалла, калчасен хушши 7 – 10 см пулни технологие тивĕҫтерет.

Ҫак пахча ҫимĕҫе ҫу каҫа 2 – 3 хут шăвармалла. Минераллă удобренипе апатлантарма та манмалла мар. Асра тытма: кая хăварса акнă хĕрлĕ кăшманăн ҫамрăк ҫулҫисене тĕрлĕрен сиенлĕ хурт-кăпшанкă кăмăллать. Шăтса тухнă калчана вĕсенчен хӳтĕлеме вăраха ямасăр табак тусанĕпе, йывăҫ кĕл хутăшĕпе усă курмалла. Тĕрĕс-тĕкел пăхса ӳстернĕ хĕрлĕ кăшман 100 – 110 кунта пулса ҫитет.

Унтан вара тутлă борщпа винегрет тата ытти тĕрлĕрен салат хатĕрлесе сĕтеле уяв илемĕ кĕртме пулать.

**А. ШАРИКОВ,**
**пахчаҫă-агроном.**

**Тереҫ ялĕ.**

Пахчара

# Ҫырла йăранĕ ҫинче

***Паян килти хушма хуҫалăхсенче виктори ҫырли нумай туса илеҫҫĕ. Пирĕн те ҫырла йăранĕсем пысăк. Тухăҫа ӳстерес тесен вĕсене паян мĕнпе апатлантарни вырăнлă-ши?***

**М. ПАВЛОВА.**

**Чуманкасси ял тăрăхĕ.**

Чăнах та, садри виктори плантацийĕсем нумай хуҫалăхра пысăк вырăн йышăнаҫҫĕ. Вĕсен хуҫисем ҫак ҫырлана сутса тупăш тăвас шутлă пулни иккĕлентермест. Тупăша ӳстерес тесен чечеке ларакан ҫырлана вăхăтра апатлантарасси пирки асра тытмалла.

Тĕмĕсем чечек ҫурнă вăхăтра ҫырла йăранĕсене каҫ кӳлĕм бор кислотипе е цинк кӳкĕрчĕпе (сернокислый цинк) шăвармалла. Усăллă япаласем ҫулҫăна хăвăрт кĕрсе вырнаҫаҫҫĕ.

Ҫырласем тытăннă вăхăтра та йăрансем пирки манмалли ҫук. Ку вăхăтра вĕсене апатлантарма ĕне тислĕкĕпе тата йывăҫ кĕлĕпе усă курни аван. Ҫак тĕллевпе йăрансем хушшине тислĕк хумалла. Пĕр литр вĕри шывра йывăҫ кĕлне ирĕлтермелле те 9 литр шыва хушмалла. 1 тăваткал метр пусне 1 литр хутăш кирлĕ пулать.

Халăх мелĕ те пур. Пахчара пуҫтарнă ҫум курăкне шыва ярса лартăр та тепĕр эрнерен вăл паха удобрени пулса ҫитет.

# Помидор ăнтăр тесен

***Теплицăра помидорсем чечеке ларчĕҫ. Ытларах ҫимĕҫ илес тесен вĕсене паян мĕнпе апатлантарни вырăнлăрах-ши?***

**Н. НИКОЛАЕВ.**

**Ярапайкасси ял тăрăхĕ.**

Помидорсем чечеке ларнă тата ҫимĕҫ тытăннă вăхăт пулас тухăҫшăн пысăк пĕлтерĕшлĕ шутланать. Ӳсен-тăрана тутлăхлă япаласемпе ҫителĕклĕ тивĕҫтерни тухăҫ виҫипе пахалăхĕ ҫине ырă витĕм кӳнине самантлăха та манмалли ҫук. Помидора чечек ҫурнă тата ҫимĕҫ тытăннă вăхăтра апатлантарни уйрăмах вырăнлă. Ҫак вăхăтра вăл тутлăхлă япаласене ытлă-ситлĕ илеймесен, ҫимĕҫ сахал тытăнать. Тытăннисем те аталанса ҫитеймеҫҫĕ. Ҫавна пула тухăҫ та сахалланать.

Чечеке ларнă вăхăтра помидор микро- тата макроэлемент нумай ыйтать. Ҫак япаласем кирлĕ чухлĕ пур удобрени ку вăхăтра сирĕншĕн шăпах вырăнлă пулса тăнине ан манăр. Ăна валли ҫак препаратсем усăллăрах: фосфор виҫи 18 процентран иртмен вĕтетнĕ суперфосфат; иккĕллĕ суперфосфат (двойной суперфосфат); 30 – 42 процент кали тăварĕ; 53 процентран кая мар кали концентрачĕллĕ хлорид; 45 – 56 процентран кая мар кали концентрачĕллĕ сульфат.

Ĕҫ ҫынна илем кӳрет

# Кукăль ăсти



Пултарулă ҫынсем районти кашни отраслĕрех пур. Пĕрлешӳллĕ кооперативра-предприятире, килти хушма хуҫалăхра вăй хураҫҫĕ вĕсем. Ку ĕҫченсене пирĕн курма-асăрхама ҫеҫ пĕлмелле. Ырă тума пултарнине эпир вăхăтра сисни – ыттисемшĕн те тĕслĕх, ĕҫри хастарлăхпа пурнăҫ юратăвĕ, мал туртăмлă утăм хăвачĕ.

...Ильинка ял тăрăхĕнчи Чĕпĕлкассинче пурăнакан Римма Дипломатова картари ĕҫсене тирпейлесе кĕчĕ. Сехет йĕпписем 6 сехет ҫинче ҫеҫ. Паян тул ҫутиллех тăрса пĕҫернĕ кукăльсене вăл сĕтел ҫине майлаштарса хучĕ. Кану кунне ачисем килмелле, юратнă мăнукĕсем ҫитмелле. Ĕҫ вĕҫленĕ хĕрарăм сĕтел ҫывăхĕнчи пукан ҫине ларса хăйĕн пурнăҫне ума кăларчĕ. Вăл вара унăн ҫăкăр е кукăль пĕҫернипе ытларах палăрса тăрать.

Амăшĕ те час-часах кукăль-икерчĕ пĕҫеретчĕ. Унăн тăрăшулăхĕ хĕр пĕрчишĕн те хăйне евĕр ĕҫ воспитанийĕ пулнă. Ҫавăнпах пулĕ вăл ӳсерехпе кукăль пĕҫерессине хăйĕн пурнăҫĕн пĕр пайĕ туса хунă. Ял ҫыннисем те унăн ĕҫĕпе кăмăллăччĕ. «Асупа аннӳ сана кукăль пĕҫермех ҫуратса ӳстернĕ пулас. Эсĕ пĕҫернĕ кашни кукăлĕн хăйĕн тути, техĕмĕ, илемĕ», – тетчĕҫ вĕсем. Ял ҫыннисем мухтани Римма аппана ăсталăхне малалла туптама хавхалантарнă кăна. Ҫапла вара вăл ҫулсем иртнĕ май пахчари ҫимĕҫсемпе, улма-ҫырлапа тĕрлĕрен салат, компот, варени хатĕрлеме, вĕсене нумай вăхăт упрама вĕреннĕ.

